**Кĕтерне арбуз çиет.**

Кĕтерне арбуз çиет,
Эпир — çук.
Ма пĕрле çиес килет
Тепĕр чух?
—Илсе килнĕ, —
тет, — атте
Хуларан,
Аçтăрхан арбузĕ, — тет,
Пит аван.
Тепĕр чух куштан Куля
ал сулса
Юриех курмăш пулать
Арбуза.

Петĕрпе лутра Иван
Шăп кăна,
Марине тарăхнăран
Парăнать.

Вĕрентсе кăштах илсен
Шеп пулать.
Илсе тухрăм эп килтен
Шоколад.

— Çиййĕр, — тетĕп, —
ку манран
Пултăрах,
Сав нитратлă арбузран
Тутлăрах!

Сурчăкне хайхи çăтать,

Мĕн тăван?

Çавăн пек тухса хытта

Ан хăтлан.

*Борлен,Б. Кĕтерне арбуз çиет : [сăвă] / Б. Борлен // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 265-266.*